# Тилли юрлать - ытарлӑ юптарать

Петӗр Хусанкай сӑвви-поэмине эпир кӗҫӗн классенчех вулама пуҫлатпӑр та мӗн вӑтам шкул пӗтеричченех унӑн пултарулӑхне тишкерсе вӗренетпӗр. Пирӗншӗн вӑл чӑннипех те поэзири ҫӑлтӑрсен ҫӑлтӑрӗ.

П. Хусанкай ӑсталӑхӗ нумай ӗнлӗ, хаклӑ йышши алмаз е бриллиант чул еверлӗ. Ӑна кирек хӑш еннелле ҫавӑр, вӑл ҫав-ҫавах ялтӑрать, ҫиҫет, илӗртет, хӑй патне туртать. Эпӗ унра акӑ кулӑшпа питлеве, ытарлӑ юптарӑва курса тӗлӗнетӗп. Поэт профессиллӗ сатирик е юморист пулман. Анчах та ку унӑн кулӑш туйӑмӗ ҫителексӗр аталаннӑ тенине пӗлтермест.

Илер-ха теслӗхрен «Тилли юррисем» ярӑм-поэмӑна. Кам-ши вӑл, мӗнлерах ӑсчах-Тилли? Ҫак сӑнар - авалхи пурнӑҫӑн тутти-масине пур енчен те ас тивсе курнӑ чӑваш старикӗ. Сӑвӑ ярӑмӗнче пирӗн ума ӑслӑ-тӑнлӑ, сапӑр, чӗкеҫ чӗлхиллӗ ытармалла мар чӗрӗ ҫын тухса тӑрать. Вӑл темле йывӑр лару-тӑруран та, хуйхӑ-суйхӑран та хӑтӑлса тухмалли мел тупать. Вӑрӑм кун-ҫулӗнче унӑн кулянмалли самант пайтах пулнӑ пулин те, Тилли ҫав пулӑмсене ытарлӑн, шӳтлесе те юптарса каласа пама тӑрӑшать. Кулленхи пурнӑҫ драминче хӑйне йӑпатмалӑх, вулакана савӑнмалӑх тата шухӑшламалӑх ҫаврӑнӑшсем, ытларах ытарлӑ танлаштарусем тупма мехелпе ӑсталӑх ҫитерет.

Ҫемьере вӗсем пиллӗкӗн ӳснӗ. «Чи кӗҫӗнни», «аслӑ пехилли», ӑраскалли, ҫав вӑхӑтрах «ӑру асси» Тилли пулнӑ. Хӑй аса илнӗ тӑрӑх ҫамрӑк чухне унӑн «хӗрсем вӗчӗрхенмелӗх» нар пек сӑн-пит пулнӑ. Ахальтен-им «тӑватӑ касра тӑватӑ варли, пӗри кӑна хӗве хупмалли», «тӑваттӑран пӗри - Тур ҫырни» тет. Тӑватӑ хӗре пӗр харӑс юратакан каччӑ Турӑпала пӳлӗхе шӳтлерех ӳпкелешем пекки те тӑвать. Мӗншӗн унӑн пысӑк юратӑвӗ тепӗр тӑватӑ ҫынна пӳрмен-ши тет. Тилли чарусӑр, чӑрсӑр каччӑ. Анчах вӑл нихҫан та ҫӑмӑл шухӑша ирӗке яни, ваттисен

йăли-йĕркинчен иртни çук. Пĕринче акă «урампа иртсе пыруçăн» яр уçнă кантăкран кăвак куçлă «тухья пуç» кăчăк туртса хăй патне чĕнет. Хальхи поэтсенни пек каччă чĕри çунатланчĕ, хĕре чуп тума ыткăнчĕ тетĕр-и? Çук. Тилли хĕр чĕннине илтмĕш пулать, чӳрече патне те пымасть. Уçă юраттарса хĕр килне кĕрет, шӳтлесе атă кунчине 70 пуслăх кĕмĕл ярса хĕре атă хывтарать. Çак самантра мерчен те ахах чĕлхеллĕ Тилли темле «тамаша» та, савăшу та кăтартма пултарнă. Анчах та вăл кашни япалан йĕрки пуррине яланах асра тытать тата ăна мала хурать. Çакăн пек юратуллă пулăма шӳтпе ытарлăх шайĕнче сăнласа панă хыççăн автор сăвă вĕçĕнче чăваш халăхĕн кăмăл-сипет пахалăхне мала кăларса тăрататть. Яшлăхра Тилли хăй кам пулнине уçлăхра вĕçекен хурчăкапа танлаштарать. Тӳрех калăпăр - чăннипех ытарлă танлаштару. Хурчăка тесенех чĕпĕсене тапăнакан çивĕч куçлă, сарлака çунатлă, вăйлă вĕçен кайăк тухса тăрать. Мĕн тума кирлĕ пулнă-ха Петĕр Хусанкая Тилли сăнарне хурчăка пек кăтартма? Хурласа сивлеме-и е сăмах çаврăнăшĕшĕн çеç? Пачах урăхла. Хурчăка санарĕ унăн чăрсăрлăхне, шухăлăхне, кăштах вĕçкĕнлĕхне те кăтартмалли сăнар. Çак «хурчăка»:

**«Пĕр туйран та эп юлмарăм,**
**Чуп туман хĕр хăвармарăм!», - тет...**

**«Эп хам Тилли, пуп хунă ят Çерук,**
**Ман пек такмакçă таврара та çук!»**

тесе кăшкăру палли лартсах палăртать. Тилли ăста такмакçă пулни вулаканшăн ум сăмахри «Мехел тени мĕскер тени пулать?» сăвăрах паллă. Çавăнпа та хăй çинчен «ман пек такмакçă таврара та çук!» тенине эпир чун-чĕререн, чăн пулнă пекех ним иккĕленмесĕр йышăнатпăр. Йĕркесен янравлăхĕ, сасăсен вылявĕ, кĕвĕлĕх сăнарăн веçкĕнрех енĕсене хупласа пыраççĕ. Тилли хăй такмакçă, шӳтпе путĕш ăсти пулнине, темле йывăрлăхра та пуçа усма кирлĕ маррине çирĕплетсе ака çапла калать:

**«Эй, эсир, чӗлӗмҫӗсем**
**Тӗнчери кӗлмӗҫӗсем!**
**Хам та эпӗ чӗлӗмҫӗ,**
**Тен, сиртен те кӗлмӗҫӗ**
**Нушине те курнӑ ҫав,**

**Пулчӗ пулӗ тӗрлинчен**
**Пурӑнар-ха пурнӑҫа**
**Йӗм тӑп ҫӗре перниччен**
**Йӗм тӗп ҫӗре перӗнсен**
**Тапрататпӑр ҫӗнӗрен**

Ҫак шутлӗрех такмак - чӑваш философийӗн пӗр пысӑк пайӗсенчен пӗри. Чӗлӗмҫӗ, кӗлмӗҫӗ пулсан та пурнӑҫа мӗн ватӑличчен, чун тухиччен тивӗҫлӗ пурӑнса ирттермелле тени. Кашнин хӑйӗн ҫуни, хӑйӗн учӗ, хӑй ҫемӗллӗ шӑнкӑравӗ тет вӑл. Ҫав шӑнкӑрав ҫул кӗскетет, ӗмӗр иртнине ас тутарать. Ҫавӑнпа та Тилли:

**«Выльӑр-кулӑр ытларах!**
**Урӑх пулмӑр ҫамрӑк»,** - тесе хӑй евӗр пехил парать. Тилли шур сухаллӑ ватӑ пулин те чунӗпе ҫав-ҫавах ҫамрӑк-ха. Халӗ те вӑл яш чухнехи самантсене пӗр енчен ӳкӗнӗҫлӗн, тепӗр енчен шухӑ вӑхӑтри йӑлине пӑрахмасар вӗҫкенленсе те хӑпартланса ҫапла аса илет:

**«Ӗлӗк чухне эп хам ӗлӗкчӗ,**
**Пӑшатан пек куҫлӑ йӗкӗтчӗ**
**Кача пӳрне тулли ҫӗрӗччӗ**
**Кӑчӑк туртмассерен пӗрхӗрчӗ», - тет.**

Халӗ акӑ ҫав вӑхӑтсем тӗлӗк пек ҫеҫ иккен. Ватӑлнӑ, йӗтем ҫиййӗ пек кукша пуҫлӑ, вӑрӑм сухаллӑ Тилли ытларах та ытларах пурнӑҫ пӗлтерӗшӗпе тӗллевӗ ҫичен кӑсӑкланать. Тем ҫинчен те шухӑшлатъ, ҫав-ҫавах сӑнарлӑ, юптарса калаҫать. Тилли чӗлхи ытарлӑ метафорӑллӑ: Акӑ пӗр тӗслӗх:

**«Тараканран ытла ылтӑн ҫук,**
**Пул хуппинчен ытла кӗмӗл ҫук,** - тет хӑй кулянса та тӑрӑхласа. Ҫапла иртет унӑн «пурнӑҫ камичӗ». Хӗрӗнкӗ чухне ҫеҫ вӑл:

**«Хамшӑн хам эп Турӑ та патша», -**

тесе «курнăçланать». Анчах ку сăмахсем маларах çамрăк чухне мухтанарах е вĕçкĕнленсе каланă сăмахсем мар ĕнтĕ. Вĕсем йӳçĕ куççулĕпе тулнă, чун-чĕререн тухакан «тăварлă сăмахсем...

Чăн сăмахăн суйи çук. Тилли пек ăслă шухăшласа илемлĕ калаçнине, выляса-кулса ӳснине, хушăран çапла юптарса илнине, ял-йышпа, тăван-пĕлĕшпе килĕштерсе пурăннине нимĕн те çитмест. Эппин Тилли чунхавалĕ ăруран ăрăва куçса пытăрччĕ, Петĕр Хусанкай пехилĕ кашни чăваш патне çиттĕрччĕ.

**П. МЕТИН**